# Октябрь юрӑҫи



*Чун-чӗрене тыткӑнлакан хӳхӗм ҫӗре вырнаҫнӑ Аслӑ Арапуҫ. Вӑл хавассӑн йӑлтӑртатса юхакан Пӑла шывӗ хӗрринче. Яла вӑрман сулхӑн парса тӑрать. Ялтан инҫе мар, юмахри паттӑр евӗр, Шурут тӑвӗ курӑнать. Вӑл тӗрлӗ ӳсентӑранпа, улма-ҫырлапа пуян, ун айккинчен тӑрна куҫӗ пек тӑрӑ ҫӑлкуҫсем тапса тӑраҫҫӗ. Сӑр вӑрманӗ те юнашарах.*

*Ҫак пуян та илемлӗ тавралӑх кашнин чӗринче ырӑ туйӑм ҫуратать, хӑй патне илӗртет; ҫын чӗринче поэзи вут-хӗлхемӗ пулсан, унӑн сисмесӗрех сӑвӑ-юрӑ шӑранма тытӑнать.*

*Шӑп ҫак тӑрӑхра ҫуралса ӳснӗ ӗнтӗ Октябрь тантӑшӗ, пирӗн сумлӑ юбиляр Василий Иванович Давыдов-Анатри.*

*Шкула кайсан, вулама-ҫырма вӗренсен, пулас сӑвӑҫ ят илнӗ поэтсемпе писательсен кӗнекисене тӗплӗн вулать. Ҫав ҫулсенче Василий Давыдов хӑйӗн малтанхи «Ҫуркунне», «Ҫуллахи илем» сӑввисене хайлать. «Ҫуллахи илем» сӑвви районти «Коммунар» хаҫатра пичетленсе тухать, ку ҫамрӑк сӑвӑҫа ҫунатлантарса ярать.*

*Ялти шкултан вӗренсе тухсан, пулас поэт Шупашкарти хаҫат шкулне вӗренме кӗрет. Хӗрӳллӗ ҫамрӑк хаҫат шкулӗнчи литкружокра тӑван поэзи ӑстисемпе—Илле Тукташпа, Иван Ивникпе, Уйӑп Мишшипе, Ухсай Яккӑвӗпе, Максим Ястранпа, Александр Кӑлканпа тӗл пулса паллашать, вӗсенчен сӑвӑсем ҫырма вӗренсе пырать. Унӑн пирвайхи паллӑрах сӑввисем 1947 ҫулта «Малтанхи утӑмсем» ятлӑ кӗнекере пичетленнӗ.*

*В. Давыдов-Анатри «Манӑн ӗмӗт» сӑввинче творчество ӗҫӗн ҫӳллӗ тӳпине курать, унта ҫитме ӗмӗтленет:*

Эреветлӗ чӗкеҫ пек вӗҫеесчӗ,
Кӑвак пӗлӗт тӳпине ҫитеесчӗ...

*Поэт кӗнеке хыҫҫӑн кӗнеке кӑларать, унӑн сасси ҫирӗпленнӗҫем ҫирӗпленет. Вӑл ҫыравҫӑн обществӑри вырӑнне ӑнланать: поэт вӑл ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвакан халӑх юрӑҫи, ун ӗҫӗ-хӗлне сӑнлаканӗ пулма тивӗҫ.*

*Сӑвӑҫ тӑрӑшса ӗҫлерӗ, вӑл ҫирӗм кӗнеке пичетлесе кӑларчӗ, вӗсенчен паллӑраххисем: «Ҫамрӑк ӑру» (1951), «Пӗчӗк тусӑмсем» (1956), «Чӗре хушнипе» (1957), «Ҫурхи кунсем» (1964), «Октябрь тантӑшӗ» (1968), «Телейлӗ туслӑх» (1965), «Пурҫӑн тутӑр» (1972), «Тӑвансемӗр, тав сире» (1973), «Сӑвӑсемпе юмахсем» (1974) т. ыт. те.*

*Кунсӑр пуҫне поэт, халӑх сӑмах пуянлӑхӗпе усӑ курса, «Чеменпе Мерчен» ятлӑ поэма ҫырать. Ӑна А. Артемьев якатса редакцилет, вара поэма 1959 ҫулта пичетленсе тухать. «Чеменпе Мерчене» ҫырма К. В. Ивановӑн «Нарспи» поэмине чӗрере тытни хавхалантарать, вӑл сюжета «Нарспипе» «Хӗн-хур айӗнче» поэмӑсенчи майлӑрах йӗркелет. Поэмӑна силлабика виҫипе, халӑх сӑвви-юрри майлӑ ҫырнӑ. Ку произведенире автор тӗрлӗ илемлетекен мелсемпе пӗлсе усӑ курать, вӗсем произведенин шухӑшӗпе сӑнарӗсене вӑйлатаҫҫӗ, асра юлмалла тӑваҫҫӗ. Мерчене пуянсем вӑрласа кайсан, хурӑнсем хурланса юлаҫҫӗ, Чеменпе Мерчен Ленина курнӑ самантра тӳхӑҫран хӗвел кулса, ялкӑшса тухать.*

*Сӑвӑҫ пултарулӑхӗ кашни вулаканшӑн паллӑ. Унӑн тематики анлӑ: вӑл аслӑ Ленина, Октябре, тӑван чӗлхене, халӑхсен туслӑхне ырласа-мухтаса сӑвӑ шӑрантарать. Октябрь революцине пула чӑваш халӑхӗ те ирӗккӗн сывласа ячӗ, телейлӗ пурнӑҫ турӗ.*

*В.Давыдов-Анатри ачасем валли те ҫырать.*

*«Кӗвӗ-юрӑ ҫуначӗ, сӑвӑ-юрӑ чунӗ», тенӗ халӑхра. Сӑвӑҫ ҫакна яланах асра тытать. Ҫавӑнпа пулӗ, чӑваш композиторӗсем унӑн сӑввисене юрра хываҫҫӗ. В. Давыдов-Анатрин—ҫӗр ытла юрӑ янӑрать.*

*В. Давыдав-Анатри хулара та, ялсенче те час-часах вулакансемпе тӗлпулусем ирттерет, литпӗрлешӳ членӗсемпе, ҫамрӑк авторсемпе курса калаҫать. Темиҫе ҫул хушши ӗнтӗ вӑл промышленность тракторӗсем тӑвакансем патне ҫӳрет.*

*Унӑн пултаруллӑ ӗҫӗсене шута илсе, партипе правительство ӑна РСФСР тава тивӗҫлӗ культура ӗҫченӗ, Чӑваш АССРӗн тава тивӗҫлӗ культура ӗҫченӗ ячӗсене панӑ.*

*В. Давыдов-Анатри хӑйӗн утмӑл ҫулне ӗҫри хастарлӑхпа кӗтсе илет, ҫӗнӗ произведенисем ҫырать.*

*Сергей ЮШКОВ.*

# Тавах ҫӗршыв илемне

**Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ**

## Ӗмӗр ялкӑш, Октябрь ялавӗ

**Юрӑ**

**Эс, Октябрь хӗвелӗ, пире ҫутатан,**
**Ӗмӗр-ӗмӗр ҫӳлте, тӳпере ялкӑшан.**
**Инсӗлми хӑватна ҫӗршыва халаллан,—**
**Пуҫ таятпӑр сана, тав тӑватпӑр чунтан.**

Октябрь ялавĕ,
Ĕçхалăх мухтавĕ,
Эпир çĕнтерÿллĕн утатпăр санпа,
Хĕвелĕмĕр — Ленин,
Ăс-халăмăр — парти
Пире уçса панă телейлĕ çулпа.

Эс, Октябрь хĕвелĕ, савса пĕр çĕре,
Тус-тăван çемьене пĕрлештертĕн пире.
Çĕр-планета çинче эпир халь хисепре,—
Пурнăçа юрататпăр, упратпăр мире!

Октябрь ялавĕ,
Ĕçхалăх мухтавĕ,
Эпир çĕнтерÿллĕн утатпăр санпа,
Хĕвелĕмĕр — Ленин,
Ăс-халăмăр — парти
Пире уçса панă телейлĕ çулпа.

Эс, Октябрь хĕвелĕ, çĕклен вăй-хала,
Пултарулăх пиллен, чĕнен малалла.
Пĕтĕм халăх ĕçре тăрăшать, кĕрешет,
Сан тавра кар тăрать, сан тавра пĕрлешет.

Октябрь ялавĕ,
Ĕçхалăх мухтавĕ,
Эпир çĕнтерÿллĕн утатпăр санпа,
Хĕвелĕмĕр — Ленин,
Ăс-халăмăр — Парти
Пире уçса панă телейлĕ çулпа.

## Эпир вĕсем, коммунистсем

А. Н. Лазаревăна

Эпир вĕсем, коммунистсем,
Вут-çулăмра çуралнисем,
Çĕнĕ çулсем уçакансем,
Малашлăха куракансем,—
Эпир вĕсем, коммунистсем.

Эпир вĕсем, коммунистсем,
Чунтан çунса тăракансем,
Ильич ĕçне тăваканcем,
Çĕршыв чысне упракансем,—
Эпир вĕсем, коммунистсем.

Эпир вĕсем, коммунистсем,
Ялан малта пыракансем,
Тăванлăха савакансем,
Мире хăват паракансем,—
Эпир вĕсем, коммунистсем.

Эпир вĕсем, коммунистсем,
Халăхпала утакансем,
Телей уççи тупакансем,
Этемлĕхе сыхлакансем,—
Эпир вĕсем, коммунистсем.

Эпир вĕсем, коммунистсем,
Илемлĕ пурнăç çыннисем,
Ыр самана йыхравçисем,
Çÿнми Октябрь çутисем,
Эпир вĕсем, коммунистсем.

## Эпĕ патăм сире юрласа

Пĕрчĕн-пĕрчĕн сăмах суйласа,
Эпĕ патăм сире юрласа.
Пуян эсир çăкăр-тăвартан,
Хăналарăр — тавах чун-вартан.
Каймалла. Çул курки аллăмра,
Уçăрсам вырăсла хапхăра.
Çунат парăр çунан чунăма,
Питĕ йывăр сиртен уйрăлма.
Пĕрчĕн-пĕрчĕн сăмах суйласа,
Эпĕ патăм сире юрласа.
Тăвансем таравату пулнăран,
Ман тухассăм килмест çак çуртран.

## Анне панă парнине...

Анне панă парнине,
Симĕс пурçăн кĕпине,
Çав териех хитререн
Эп ямастăп çийĕмрен.

Атте панă парнине,
Çÿл кĕлеллĕ аттине,
Ытла кăмăл килнĕрен
Тăхăнатăп кунсерен.

Аппа панă парнине,
Шур çÿçеллĕ тутрине,
Кĕр кунĕсем çитнĕрен
Эп çыхатăп каçсерен.

## Çурхи илем

Çитрĕ çутă çуркунне,
Ентĕ чунăм хĕпĕртет,—
Çунат сарать çĕр-анне,
Уй-хир, вăрман ешерет.
Çитрĕ çутă çуркунне,
Хĕвел вылять тÿпере.
Саркайăк та юррине
Пуçлать симĕс ĕшнере.
Çитрĕ çутă çуркунне,
Мотор сасси кĕр-кĕрлет.
Эртелпеле çĕр ĕçне
Пĕтĕм ялйыш пикенет.
Çитрĕ çутă çуркунне,—
Садсем шап-шур çеçкере.
Тавах çĕршыв илемне,—
Мĕн чул савнăç чĕрере!

## Ĕмĕр пĕрле пурăнас

Юрă

Тăван, мĕн калаçас, мĕн сăмахлас,—
Ĕмĕр çапла пĕрле пурăнас.
Авăтать куккук,
Авăтать куккук,—
Янăрать вăрман.

Хамăр тăван çырлан, ай, туйăнать,
Курмассерен чунăм савăнать.
Авăтать куккук,
Авăтать куккук,—
Янăрать вăрман.

Çур çитсенех уй-хир, ай, ешерет,—
Унта тăван сасси илтĕнет.
Авăтать куккук,
Авăтать куккук,—
Янăрать вăрман.